# Курава тĕп уявсене халалланă

**Чылайранпа пĕлетĕп Упи вăтам шкулĕнче ачасене ӳнер ĕçне вĕрентнĕ И. Матвеев педагога. Урамра тĕл пулсан сывлăх сунмасăр иртместпĕр. Ку хутĕнче Иван Петровича районти тĕп библиотекăра тĕл пултăм. Кунта ентешĕм хăй ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ.**



Г. БОРЗИН

И. Матвеев 1949 çулхи юпа уйăхĕнче Çĕнĕ Йĕкĕт ялĕнче çуралнă. Анат Кушарти пуçламăш, Упири вăтам шкулсенче вĕреннĕ. Алла аттестат илнĕ хыççăн Шупашкарти пир-авăр техникумĕнче пĕлӳ пухнă вăл. Çарта пулнă, çар хĕсметне ракетăллă çарсенче иртгернĕ.

Каччăн вĕренес туртăмĕ пысăк пулнă. Салтак шинельне хывнă хыççăн И. Матвеев 1970 çулта И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн (халĕ университет-авт.) хатĕрленӳ уйрăмне вĕренме кĕрет. Çулталăкран аслă шкулăн ӳнерпе графика факультечĕн студенчĕ пулса тăрать. Аслă шкул сакки çинче ларнă чухне ачаран килĕштернĕ фотоаппаратпа сăн ӳкерчĕксем тăвас ĕçе малалла тăсать. Тулли кăмăлпа обществăлла профессисен факультетне çӳрет. Унти фотостуди занятийĕсене республикăри хаçат-журналта тăрăшакан пултаруллă ăстасем ертсе пынă. Кунта Иван Петрович композици, ракурс суйласа илме вĕренет.

1976 çулта И. Матвеев института ăнăçлă вĕренсе пĕтерет. Аслă пĕлӳллĕ специалиста Чăваш Енти Вĕрентӳ министерствин направленийĕпе Упи вăтам шкулне ĕçлеме яраççĕ. Вăл кунта ӳнер, черчени тата ĕç учителĕ пулса вăй хума пуçлать.

— Хĕрĕх виçĕ çул тăрăшрăм тăван шкулăмра. Вăхăчĕ сиккипех малалла вирхĕнет, ав. Çитмĕл урлă каçрăм. Çамрăксене çул памалла, иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен шкулта ĕçлеме пăрахрăм, — тет Иван Петрович.

Çак тапхăрта шкулта вăй хурса миçе ачана ӳкерме, столяр ĕçне юратма вĕрентмен-ши И. Матвеев? Унăн вĕренекенĕсем хушшинче район, республика шайĕнчи конкурссенче палăрнă ачасем йышлă. Вăл вĕсемпе паян кун та туллин савăнать.

Чыслă ĕçшĕн ăна "Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ", "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ" хисеплĕ ятсем панă.

И. Матвеев кунсăр пуçне шкулта ĕçленĕ чухне "Ракурс" вĕренӳ пĕрлешĕвне те ертсе пынă. Çак хушăра вун-вун ачана сăн ӳкерчĕксем тума вĕрентнĕ. Хăй те, вĕренекенĕсем те тĕрлĕрен конкурссене хутшăннă. Акă, унăн вĕренекенĕ пулнă Леонид Кузьмин "Тантăш" хаçат редакцийĕ йĕркеленĕ "Шкул ачи, хăвна кăтарт", ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствин "Планета детства", "Тăван енĕм, савнă ен", "Школьник, прояви себя", "Юные техники в кадре" конкурссенче палăрнă. Ăна Мускав облаçĕнчи çамрăксен лагерĕнче канма путевкăпа тивĕçтернĕ.

И. Матвеев вĕренекенĕсем — В. Гаврилов, Н. Архипов, И. Бурзаева, А. Сергеев, А. Леонтьева, И. Клементьев, А. Степанов. А. Ефремова, А. Петров, А. Артемьев ӳнерçĕ-педагог, дизайнер, йывăçа касса эрешлекен профессине суйласа илнĕ.

И. Матвеев паян кун та фотоаппарата алăран вĕçертмест, тăтăшах уçă сывлăшра пулма тăрăшать. Сăн ӳкерчĕкĕсене вара арча тĕпĕнче выртармасть. Хăй ĕçĕсемпе ял ĕçченĕсене паллаштарас тĕллевпе районти тĕп вулавăшра, ЧР Вĕрентӳ институтĕнче куравсем йĕркелет. Иван Петрович районти "Ял пурнăçĕ" хаçатпа та туслă çыхăну тытать, вăл йĕркелекен конкурссене хутшăнать.

Ку хутĕнче те вăл районти тĕп вулавăшра хăй ĕçĕсен куравне йĕркелерĕ. Ăна Иван Петрович Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа — 75, Красноармейски районне йĕркеленĕренпе — 85, Чăваш автономине туса хунăранпа 100 çул çитнине халалланă. Курава пĕтĕмпе 75 ĕç тăратнă. Куракансем "Модель автомата ППШ", "Модель ручного пулемета Дегтярева", "Модель автомата Судаева" тĕрлĕрен вертолетсен проекчĕсем, чăваш çипуçлĕ хĕр-упраçсен сăн ӳкерчĕкĕсем, йывăç çине касса тунă эрешсем, килти хуçалăхри япаласем патĕнче чылайччен тăраççĕ.

— Сывлăх пур чухне хамăн ĕçсемпе куракана савăнтарасчĕ, — тет манпа сывпуллашнă май И. Матвеев сăн ӳкерчĕк ăсти.



Т. Смирнова сăн ӳкерчĕкĕсем.